УТВЕРЖДАЮ
Проректор БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Минобразования Чувашии
……………………С.В. Петрова
«15» октября 2018 г.

# Государственная итоговая аттестация по образовательным программам основного общего образования в форме единого республиканского экзамена

## Демонстрационный вариант

контрольных измерительных материалов
для проведения в 2019 году единого республиканского экзамена
по ЧУВАШСКОМУ ЯЗЫКУ

Подготовлен кафедрой чувашского языка и литературы
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИПЕ
## 2019 çулта тытмалли республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕслĕх варианчĕ

### Тĕслĕх варианта ăнлантарни

Тĕслĕх варианта 9-мĕш класс пĕтерекенсене пулас экзамен тытăмĕпе тата йĕркипе паллаштарма хатĕрленĕ: экзамен ĕçĕн тытăмне ăнлантарнă, заданисен формипе шутне кăтартнă, экзамен ĕçĕсене хакламалли критерисене палăртнă. Пĕлӳ содержанийĕн элеменчĕсене çавăн пекех кодификаторта çырса панă.

Итленĕ текста çывăх çырмалли изложени текстне «Экзамен ĕçĕсене хакламалли критерисем» пайра илсе панă.

### Вĕренекен валли хатĕрленĕ инструкци

Экзамен ĕçĕсене тума 3 сехет те 55 минут (235 минут) уйăрнă. Пĕтĕм ĕç 3 пайран тăрать.

1-мĕш пайра – итленĕ текста çывăх изложени çырмалла. Ăна 75 минутра тума сĕнетпĕр.

2-мĕш пайра – панă текста тимлĕ вуламалла та ыйтусене хуравламалла. Сире хатĕр текстпа заданисем валеçсе парĕç. Сирĕн итленĕ текстпа алла панă текст содержанийĕсене танлаштармалла. Çавăнпа та алла панă текста тимлĕ вулăр, ун содержанине лайăх ăнланма тăрăшăр. Кун хыççăн – сĕннĕ 13 ыйтăва хуравлама пуçăнăр. Кашни ыйту хыççăн 4-шар вариант хурав панă. Вĕсенчен пĕри çеç тĕрĕс. 2-мĕш пайри ыйтусене хуравлама 40 минут уйăрсан та çителĕклĕ пулĕ.

Экзамен ĕçĕн 3-мĕш пайĕнче – итленĕ тата вуланă текстсем тăрăх калăпăшĕ енчен пысăках мар ăслав сочиненийĕ хайламалла. Хайлав çырма 120 минут уйăрсан аван. Ĕçсене мĕнле йĕркепе панă, çав йĕркепех тума тăрăшăр.

2.1-2.13 ыйтусен хуравĕсене хурав бланкĕ çине çырмалла. Чи малтанах хуравсен бланкĕ çине пĕтĕм задани номерĕсене çак йĕркепе çырса тухăр:

2.1)
2.2)
…
2.12)
2.13)

Номерпе юнашар сылтăм енче 2.1–2.13 ыйтусен хуравĕсене çырăр. Тĕрĕс мар хурав çырсан ăна туртăр та унпа юнашар çĕннине çырăр.

1-мĕшпе 3-мĕш пайсен заданийĕсене хуравсен бланкĕ çине туллин çырса пурнăçламалла. Хуравсене хура чернилпа çырмалла.

Тимлĕ пулăр! Васкамасăр, тĕплĕ ĕçлĕр! Хăвăр тĕллĕн ĕçлеме вăй тата пĕлӳ пуррине шанăр!

Ĕçе пикенĕр.

***Ăнăçу сунатпăр сире!***

## 2.14. 3-мĕш пай

**2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 14.1, 14.2 е 14.3 ĕçсенчен пĕрне пурнăçлăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 14.1, 14.2 е 14.3.**

**14.1. «Тăван халăх телейĕшĕн тăрăшакансем»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ аргументпа ĕнентерĕр: пĕр аргументне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Изложение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**14.2.** Вуланă текстра палăртнă **«Тăван чĕлхе – халăхăн аваллăхĕ, тăван чĕлхе халăхăн сумлă та телейлĕ малашлăхĕ»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ аргументпа ĕнентерĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Изложение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**14.3.** ***Тăван чĕлхемĕр*** ăнлава Эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Мĕн вăл тăван чĕлхемĕр?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тезис вырăнне Хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ аргумент тĕслĕхпе усă курăр: пĕр аргументне вуланă текстран, теприне Хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе услови, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Изложение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 2019

## 1-мĕш пай

1. ***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***

Изложенири сăмах шучĕ 70-тен кая пулмалла мар.

Изложение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

Çырса памалли сăмахсем: *Николай Васильев, Иккасси, Етĕрне, Исментер, Даниил Семенов, Тимкка Семенов.*

## 2-мĕш пай

***Алла панă текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр, 2.1-2.14 ĕçсене тăвăр.***

(1)Тăван чĕлхемĕрçĕм…(2) Ку сăмахсене çын хăйĕн пĕтĕм юратăвне, чĕрери туйăмне пуçтарса калать. (3)Шухăшлатăн та тĕлĕнетĕн: мĕнле тарăн пĕлтерĕшлĕ çак икĕ сăмах!

(4)Тăван чĕлхе – чун енчĕкĕнче ылтăн-кĕмĕл пек шăнкăртатакан пуянлăх. (5)Унта – Тăван çĕр-шывăн сенкер пĕлĕчĕ, уçă сывлăшĕ, аслати-çиçĕмĕ, хирĕ-уйĕ, улăхĕ-çаранĕ, тăвĕ-сăрчĕ, Атăлĕ-Пăли, унăн ытарайми юманлăхĕпе шĕшкĕлĕхĕ…(6)Пурнăçра ăру хыççăн ăру иртет: пĕр ăру вилет, тепри çуралать, вĕсен пурин те ăс-пуç пуянлăхĕ чĕлхере упранса юлать.(7) Халăх сăвви-юрринче, юмах-халапĕнче, халăх сăмахлăхĕнче этемшĕн Тăван çĕр-шыв чи хакли пулни уйрăммăнах уççăн палăрса тăрать.

(8)Халăх мĕн авалтанпах çамрăксене хăйсен тăван чĕлхине юратма, хисплеме вĕрентнĕ.(9) Çавăнпа та-и, тен, пирĕн халăхăн пултарулăхĕнче тăван ашшĕ-амăш чĕлхине манакансенчен тăрăхласа кулаççĕ, ун пек çынсем çине халăх ашшĕ-амăшне маннă çынсем çине пăхнă пекех йĕрĕнсе пăхать.

(10)Аслашшĕсен чĕлхине пĕлмен чăваш мĕскĕне тухнă, маннине – шелленĕ, телейсĕр тесе шутланă, пĕлес темене – айван тенĕ, юратманнине – ылханса ятланă.

(11)Тăван чĕлхе – халăхăн аваллăхĕ, тăван чĕлхе халăхăн сумлă та телейлĕ малашлăхĕ.

*(Г.Н. Волков çырни тăрăх)*

**2.1.** Итленĕ текстпа вуланă текста мĕнле шухăш пĕрлештерет?
1) Атте-анне ăшши çеç ачана телей кÿрет.
2) Чыса çамрăкран упра.
3) Тăван халăх, тăван чĕлхе малашлăхĕ пирĕнтен килет.
4) Ĕç – пурнăç илемĕ.

**2.2.** Хăвăр вуланă текстра автор шухăшне хăш предложени уçса парать?
1) 1 2) 6 3) 8 4) 11

**2.3.** Текста мĕнле стильпе çырнă?
1) калаçу стилĕпе
2) наука стилĕпе
3) публицистика стилĕпе
4) илемлĕ литература стилĕпе

**2.4.** Хăш предложенире антоним пулакан глаголсем пур?
1) 1 2) 4 3) 6 4) 11

**2.5.** 2-мĕш предложенире сасă шучĕ сас палли шутĕнчен ытларах сăмах хăшĕ?
1) сăмахсене 2) пĕтĕм 3) юратăвне 4) калать

**2.6.** 4-мĕш предложенире мĕнле троп палăрать?
1) танлаштару 2) перифраз 3) сăпатлантару 4) гипербола

**2.7.** 5-мĕш предложенири иккĕмĕшле сăмах (*юманлăхĕпе)* мĕнле пулнă?
1) *ю* евĕрлев сăмахĕ çумне *-ман* тата *-лăхĕпе* аффикссем хушăннипе
2) *юм* япала ячĕ çумне *-ан* тата *-лăх* аффикссем хушăннипе
3) *юман* япала ячĕ çумне *-лăх* аффикс хушăннипе
4) *юманлăх* япала ячĕ çумне *-пе* аффикс хушăннипе

**2.8.** 5-мĕш предложенире *улăхĕ-çаранĕ* сăмаха мĕншĕн дефиспа çырнă?
1) мăшăр сăмах пулнă пирки
2) хутлă сăмах пулнă пирки
3) икĕ хут калакан сăмах пулнă пирки
4) *çаран* татăка яланах дефиспа çырнă пирки

**2.9.** 11-мĕш предложенири *та* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?
1) паллă ячĕ
2) местоимени
3) союз
4) глагол

**2.10.** *Ку сăмахсене çын хăйĕн пĕтĕм юратăвне, чĕрери туйăмне пуçтарса калать* предложенире (2 №) шухăш тĕшши хăш сăмахсем çине ӳкет?
1) ку сăмахсене
2) çын
3) хăйĕн пĕтĕм юратăвне, чĕрери туйăмне пуçтарса
4) калать

**2.11.** *Халăх мĕн авалтанпах çамрăксене хăйсен тăван чĕлхине юратма, хисплеме верентнĕ* предложенире (8 №) подлежащи пулакан сăмах хăшĕ?
1) халăх 2) çамрăксене 3) хисеплеме 4) вĕрентнĕ

**2.12.** 9-мĕш предложени тытăмĕ енчен хăш ушкăна кĕрет?
1) сыпăнуллă хутлă предложени
2) союзсăр хутлă предложени
3) пайĕсене деепричасти аффиксĕпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени
4) пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложени

**2.13.** 5-мĕш предложенире запятойсем лартнин сăлтавне ăнлантарăр.
1) пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннă пирки
2) сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки
3) сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки
4) союзсăр хутлă предложени пайĕсем умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене кăтартнă пирки

© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 2019

**Экзамен ӗҫӗсене**
**хакламалли критерисем**

**1 пай**
**Изложени тексчӗ**

Кашни этемӗн телей виҫи хӑйне майлӑ. Пӗриншӗн лайӑх мӑшӑр тупни – чи пысӑк телей. Иккӗмӗшӗ сӑра курки аллине лексенех хӑйне телейлӗ тесе шутлать. Виҫҫӗмӗшӗн телейӗ тыр-пул хӑҫан тата мӗнле акса хӑварнипе ҫыхӑннӑ. Иван Яковлевич вара хӑй телейне халӑх телейӗнчен уйрӑм курма пултараймасть. Тӑван халӑх хӑйне паян телейлӗ тесе каласан вӑл та хӑйне паян эпӗ телейлӗ тесе калӗ. Шел те, паянлӑха халӑх апла калаймасть-ха. Эппин, Иван Яковлевич та хӑйне телейлӗ тесе шутлаймасть.Унӑн халӑха телейлӗ тӑвассишӗн ытларах та ытларах ӗҫлес пулать…

Арҫын ачасен класӗнче вӗренекенсем питӗ килӗшеҫҫӗ Иван Яковлевича. Чӑнах та, маттур ачасем унта. Вӗсемшӗн савӑнмалӑх пур. Ҫакӑ – унӑн телейӗн пӗр пайӗ. Вӗренекенсем – тӗрлӗ ҫӗртен. Акӑ Константин Иванов… Пушкӑрт чӑвашӗ, маларах икӗ ҫул арҫын ачасен шкул ҫумӗнчи пуҫламӑш училищинче вӗренчӗ. Питӗ маттурскер: сӑрлама та, ҫырма та пултарать, юрлама та ӑста. Тӑрӑшсан чӑн- чӑн художника та тухӗ…

Николай Васильев – Шупашкар енчисем, Иккасси ялӗнчен. Тӗлӗнмелле ҫивӗч чӗлхеллӗ.

Тепӗр ача килӗшрӗ Яковлева. Ку вӑл – Етӗрне енчен Исментер ялӗнчен килнӗ Даниил Семенов.

Сӗве тӑрӑхӗнчен килнӗ Тӑхӑрьял ачи Тимкка Семенов (ӑна ялта Тайӑр Тимкки теҫҫӗ иккен) питӗ маттур пулас, теме те пӗлесшӗн ҫунать…

«Кусем халӑхшӑн тӑрӑшакансем пулӗҫ», – шухӑшларӗ Яковлев ачасем патӗнчен черетлӗ урокран тухнӑ май.

*(Юхма Мишши ҫырни тӑрӑх.)*

© Чӑваш Республикин Вӗренӳ тата ҫамрӑксен политикин министерстви 2019

**Изложение çак критерисем тăрăх хаклаççĕ.**

| | | |
|---|---|---|
| **И1** | **Изложенире оригинал текстăн содержанийĕ палăрни** | |
| | Текст содержанийĕ пĕртте пăсăлман. | 2 |
| | 1 факт йăнăшĕ пур. | 1 |
| | Оригинал текстăн содержанине пачах уçса паман е 2 тата ытларах факт йăнăшĕ тунă. | 0 |
| **И2** | **Оригинал текстăн содержанине уçса панă чухнехи шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ** | |
| | Ĕçре логика йăнăшĕсем çук; логика çыхăнăвне тумалли чĕлхе мелĕсемпе пĕлсе усă курнă; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | 2 |
| | Ĕçре логика йăнăшĕ 1 пур; тата/е логика çыхăнăвне тумалли чĕлхе мелĕсемпе усă курнă чухне 1 йăнăш тунă; тата/е 1 йăнăш абзацсем тунă чух кайнă | 1 |
| | Ĕçре логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă; тата/е логика çыхăнăвне тумалли чĕлхе мелĕсемпе усă курнă чухне 1-рен ытла йăнăш пур; тата/е абзацсем тунă чухне 1-рен ытла йăнăш тунă. | 0 |
| **И3** | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса памашкăн шкул ачи йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕсемпе усă курнă. | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курни сисĕнет. | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курнă | 0 |
| | Пур критерие те (И1–И3) тулли тивĕçтерсе çырнăшăн пухнă пĕтĕм балл сумми. | **6** |

**2 пай**

**2-мĕш пайăн** 1-13 ĕçĕсене **тĕрĕс** тусан шкул ачи кашни ĕçшĕн 1-ер балл илет. Хурав **тĕрĕс пулмасан** е **вăл пачах пулмасан** – 0 балл лартаççĕ.

**2-мĕш пайăн 1-13 ĕçĕсене тĕрĕс тусан пĕтĕмпе 13 балл пухма май пур.**

**2.1. 2.13 ыйтусен хуравĕсем**

2.1. – 3
2.2. – 4
2.3. – 4
2.4. – 3
2.5. – 3
2.6. – 1
2.7. – 3
2.8. – 1
2.9. – 3
2.10. – 3
2.11. – 1
2.12. – 2
2.13. – 1

© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 2019

**3 пай**

Экзамен ĕçĕн **3-мĕш пайĕ** вăл – сахалтан та 70 сăмахран тăракан ăслав сочиненийĕ çырасси. Ку сочинение итленĕ тата вуланă текстсенчен тухса тăракан информаци çине таянса хайламалла.

Хайлава çак критерисемпе тĕрĕслеççĕ.

| № | Ăслав сочинение хакламалли критерисем | Бал-сем |
|---|---|---|
| I | **Сочинени содержанийĕ** | |
| С1 | **Ача çырнă ĕç сĕннĕ темăпа тӳр килни** | |
| | Сочинени содержанийĕ сĕннĕ темăпа тӳр килет. | 2 |
| | Сочинени содержанийĕ сĕннĕ темăпа тӳр килет, анчах çырнă текстра темăран пăрăннă 1 вырăн пур, тата/е 1 факт йăнăшĕ тĕл пулать. | 1 |
| | Сочинени панă темăпа тӳр килмест (е ача ĕçĕнче темăран пăрăннă 2 е ытларах вырăн пур, е 2 е ытларах факт йăнăшĕ тĕл пулать). | 0 |
| *С2* | ***Шкул ачин шухăшĕ палăрни*** | |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать. | 2 |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартаймасть. | 1 |
| | Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырса çырлахать. | 0 |
| С3 | **Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тӳр килни** | |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет: текст тĕп шухăша (тезиса) пăхăнать, ку шухăша çирĕплетме сахалтан та 2 аргументпа усă курнă (аргументсем ачан хăйĕн пулма пултараççĕ, тата/е вĕсене ача экзаменра итленĕ е вуланă текстсенчен те илет). | 2 |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет: текст тĕп шухăша (тезиса) пăхăнать, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă тата/е шухăшлав тытăмне пăснă вырăнсем пур (аргумент тезиса çирĕплетмест, ĕнентерӳсен ярăмĕнчен чи пĕлтерĕшлине сиктерсе хăварнă, пĕр-пĕрне хирĕçлекен аргументсем пур т.ыт.те). | 1 |
| | Ăслава пăхăнман текст хайланă. | 0 |
| II | **Ăслав сочиненине пуплев енчен йĕркелени** | |
| С4 | **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| | Ĕçре логика йăнăшĕсем çук; шухăшсем логика енчен çыхăнса пынине кăтартма вырăнлă чĕлхе мелĕсемпе усă курнă; абзацсем уйăрнă чухне йăнăшсем туман. | 2 |
| | Ĕçре логика йăнăшĕ 1 тĕл пулать, тата/е логика çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе усă курнă чухне 1 йăнăш янă; тата/е абзацсем йĕркеленĕ чухне 1 йăнăш тунă. | 1 |
| | Ĕçре логика йăнăшĕ 1-рен ытла пулать, тата/е логика çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе усă курнă чухне 1-рен ытла йăнăш янă; тата/е абзацсем йĕркеленĕ чухне 1-рен ытла йăнăш тунă. | 0 |
| С5 | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса памашкăн шкул ачи йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕсемпе усă курнă. | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курни сисĕнет. | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курнă. | 0 |
| | Сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (С1–С5 критерисемпе) | **10** |

© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 2019

**Асра тытăр!**

**Сочиненире 1-мĕш (итленĕ) тата 2-мĕш (вуланă) текста тепĕр хут каласа панă е çырса илнĕ пулсан – кун пек ĕçе нуль балл лартса хаклаççĕ.**

Тĕрĕс çырма пĕлнине изложенипе сочинени тăрăх иккĕшне те пăхса хаклаççĕ. Паллах, пысăк, пĕчĕк тата пĕрешкел йăнăшсене (халь усă куракан хаклав виçисене тĕпе хурса) шута илмелле.

**Тĕрĕс çырма пĕлнине хакламалли критерисем çаксем**

| № | Тĕрĕс çырма пĕлнине хакламалли критерисем | Балсем |
|---|---|---|
| **Г1** | ***Орфографи нормисене пăхăнни*** | |
| | Орфографи йăнăшĕсем çук, е 1 пĕчĕк йăнăш пур. | 3 |
| | 1–2 йăнăш пур. | 2 |
| | 3–4 йăнăш пур. | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур. | 0 |
| **Г2** | ***Пунктуаци нормисене пăхăнни*** | |
| | Пунктуаци йăнăшĕсем çук, е 1 пĕчĕк йăнăш пур. | 3 |
| | 1–2 йăнăш пур. | 2 |
| | 3–4 йăнăш пур. | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур. | 0 |
| **Г3** | ***Грамматика нормисене пăхăнни*** | |
| | Грамматика йăнăшĕсем çук, е 1 пĕчĕк йăнăш пур. | 3 |
| | 1–2 йăнăш пур. | 2 |
| | 3–4 йăнăш пур. | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур. | 0 |
| **Г4** | ***Пуплев нормисене тытса пыни*** | |
| | Пуплев йăнăшĕсем çук, е 1 пĕчĕк йăнăш пур. | 3 |
| | 1–2 йăнăш пур. | 2 |
| | 3–4 йăнăш пур. | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур. | 0 |
| Г1–Г4 критерисем тăрăх сочиненипе изложение çырса пĕтĕмпе пухнă чи нумай балл | | 12 |

Тĕрĕс çырма пĕлнине хакланă чухне (ГК1–ГК4) **изложенипе сочинени калăпăшне** шута илес пулать. Кăтартнă нормăсемпе изложенипе сочиненире усă курнă сăмахсен пĕтĕм йышĕ сахалтан та 140 пулсан хакламалла. Изложенипе сочинениri сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-139 пулсан – кашни критерипе 1 балран ытларах лартма юрамасть.

**1 балл лартас пулсан çак условисем кирлĕ:**

Г1 – орфографи йăнăшĕсем çук (е 1 пĕчĕк йăнăш пур);

Г2 – пунктуаци йăнăшĕсем çук (е 1 пĕчĕк йăнăш пур);

Г3 – грамматика йăнăшĕсем çук;

Г4 – пуплев йăнăшĕсем çук.

Изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-139-а çитмест пулсан – ĕçе туман тесе йышăнаççĕ, 0 балл лартса хаклаççĕ.

Г1–Г4 тăрăх балл лартнă чухне – ача **изложенипе сочинение иккĕшне те çырнипе çырманнине** шута илмелле. Ача изложение е сочинение çырма тытăнман пулсан – Г1–Г4 критерисем тăрăх хакланă чух йăнăш шутне чакарас пулать: 3 тата 2 балл пачах лартма юрамасть. 1 балл лартас пулсан – çак условисем кирлĕ:

Г1 – орфографи йăнăшĕсем 2-рен иртмелле мар (2-рен иртсен – 0 балл лартмалла);

Г2 – пунктуаци йăнăшĕсем 2-рен иртмелле мар (2-рен иртсен – 0 балл лартмалла);

Г3 – грамматика йăнăшĕ 1 кăна пулмалла (1-рен иртсен – 0 балл лартмалла);

Г4 – пуплев йăнăшĕ 2-рен иртмелле мар (2-рен иртсен – 0 балл лартмалла);

Кашни критерипе **чи пысăк балл** илес пулсан – экзамен ĕçĕшĕн 9-мĕш класс ачи **пĕтĕмпе** 41 балл пухĕ.

© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 2019

## 41 баллă системăран 5 баллă системăна куçмалли шкала

| Балл | Отметка |
|---|---|
| 36-41 | «5» |
| 26-35 | «4» |
| 14-25 | «3» |
| 0-13 | «2» |